Денис ГОРДЕЕВ çыравçă:

«МАНĂН ПĔТĔМ ПУРЛĂХĂМ – САМАХ»

Д. Гордеев çыравçă пултарулăхĕ нумай енлĕ: вăл прозаик та, сăвăç та, тăлмач та, журналист та. Çапах та эпир ăна чи малтан паха калавсемпе повеçсен ăсти пек пĕлетпĕр. «Çеçен хир çилĕ» (1976), «Тĕрленĕ кĕпе» (1983), «Акман ыраш» (1991) тата ытти кĕнекине пурте юратса вулатпăр.

– Манăн пĕтĕм пурлăхăм – сăмах, – тет Денис Викторович. – Эпĕ 30-а яхăн повесть, калав, 200 юмореска çырнă. Çамрăк чух сăвăсем те хайланă. Вĕсем «Хурăнсар» кĕнекере пичетленнĕ.

– Хайлавсенчи сăнарсен прототипĕсем пур-и?

– Пур, паллах. Унсăр пĕр сăнар та калăпланма пултараймасть. Эпĕ хамăн хăш-пĕр калав сюжечĕсене тĕлĕкре куратăп, çынсемпе калаçнă чух та çуралать е хаçатра вуласа пĕлетĕп.

Пурнăç хăй вăл прототип. Акă пĕр тĕслĕх илсе парам.

Пĕррехинче мăшăр лавккана çăкăр илме кăларса ячĕ. Троллейбуссен чарăнăвне çитсен ларса канас терĕм. Кĕтмен çĕртен хирĕçри çуртăн подъездĕнчи пĕр чӳрече çĕмĕрĕлчĕ. Те харсăр ачасем ватрĕç ĕнтĕ ăна, те хăйне хăй арканчĕ, те ашкăнчăк çил çĕмĕрчĕ тесе шутласа лартăм.

Киле çитсен «Кантăк ванчăкĕсем» калав çыртăм.

– «Шăрçа пуçлă çăпата» хайлав епле çурални пирки каласа параймăр-ши?

– Сосновкăра пĕр çынна тĕрмене лартнă. Хаçатра ĕçленĕ май эпĕ унăн судне итлеме кайрăм. Çав çын çӳп-çап куписенчен тĕрлĕ япала пуçтарса 3 ывăлне пӳрт лартса панă. Унта вăл пĕрре ылтăн сехетсем тупать те милицие пĕлтерет. Çапах та ăна тĕрмене лартаççех.

Киле çитрĕм те çавăн пирки шухăшласа калав çыртăм, умне эпиграф лартрăм: «Шăрçа пуçлă çăпата, сырассине сыртăм та пусас тесе пусаймарăм».

– Хăвăрăн пĕрремĕш хайлавăра хăçан çырнă эсир?

– Çыравçă стажĕ 45 çула çитрĕ ĕнтĕ. Чи малтанхи 2 сăвă 1956 çулта пичетленнĕ. 1959 çулта «Çеçпĕл çеçкисем» кĕнекере ярăмсем кун çути курчĕç. Пĕрремĕш кĕнеке 1974 çулта тухрĕ.

– Чăваш прозаикĕсенчен эсир кама ытларах кăмăллатăр?

– Хветĕр Уяра мала хуратăп. А. Артемьевран, Л. Таллеровран, Л. Агаковран, М. Илпекрен, Ю. Скворцовран, В. Сатайран вĕренмелли нумай пирĕн. Вĕсен кĕнекисем пĕр тӳрлетӳсĕрех пичетленнĕ.

– Вырăс çыравçисенчен хăшĕ сирĕншĕн вĕрентекен пулчĕ?

– Тĕнче культурин пурнăçĕнче виçĕ пысăк пулăм пур: антика, ренессанс, вырăссен классикăлла литератури. Вĕсемпе пуринпе те паллашнă эпĕ, вĕренессе вырăс çыравçисенчен, уйрăмах А. П. Чеховран вĕреннĕ. Лескова та кăмăллатăп. Поэтсенчен Лермонтова мала хуратăп, çамрăк чухне Есенинăн пур сăввине те пăхмасăр пĕлеттĕм.

– Денис Викторович, эсир куçару ĕçĕпе те чылай ĕçленĕ.

– Эпĕ пăлхарларан, венгрларан куçарнă, хамăн хайлавсене те çав чĕлхесемпе, белорусла вулама пулать. Хаçат-журналта ĕçленĕ чух уйрăмах аппаланма тивнĕ. Анчах та куçару ман тĕп ĕç мар.

– Çын писатель пулса çуралать е кайран çеç пулать?

– Чăн малтан Турă пани пулмалла, ăна аталантармалла. Çавăнпа та питĕ нумай ĕçлемелле.

– Ачăрсем сирĕн пек писатель пуласшăн мар-и?

– Манăн 3 ача. Вăталăххи – Света – Чăваш педагогика университечĕн филологи факультетĕнчен пĕлтĕр вĕренсе тухрĕ. «Молодежный курьер», «Советская Чувашия» хаçатсенче ĕçлерĕ, ачасем валли сăвăсем çырать. Эпĕ Света ман урапа çине ларчĕ теме пултаратăп ĕнтĕ...

– Ĕмĕтĕрсемпе паллаштараймăр-ши?

– Çĕнĕ хайлав – «Куçсăр çĕр улми» çырса пĕтермелле. Вăл «Ĕмĕт», «Телей», «Элчел» пайсенчен тăрать. 2003 çулта «Улăп тăпри» роман пичетлесе кăларасшăн.

– Пысăк тав сире, Денис Викторович.

Ольга ВАСИЛЬЕВА,
ЧПУ студентки çырса илнĕ.

САЙН ӲКЕРЧĔКРЕ: Денис Гордеев ЧПУ студенчĕсемпе тата преподавателĕсемпе.